# Юрататăп Тăван çĕр-шыва!



Тăван кĕтес! Юратнă çĕрĕм!
Таса, ытарайми уйсем,
Ял вĕçĕнчи симĕс вăрманăм,
Савап сире чун-чĕререн!

**Таня Алексеева**





# Ытарайми тăван к… ес

Юрататăп Тăван çĕр-шыва! Юрататăп хамăр Чăваш Республикине! Юрататăп атте-анне çĕрне! Юрататăп кунти вăрмансене: уй-хирсене, çăл-куçĕсене! Юрататăп ытарайми тăван кĕтесĕме!







# Проект актуаллăхĕ

- Сарлака та пуян ман Тăван çĕршыв.
- Эпĕ халĕ тăваттăмĕш класра вĕренетĕп. Пирĕн класра пурĕ те 2 ача çеç: çакă мана питĕ пăшăрхантарать. Хамăр ял пуласлăхĕ питĕ шухăша ячĕ, мĕншĕн тесен ял ватăлса пырать, çамрăксем яла юлмаççĕ. Пушă килсем нумай, çакăншăн чун ыратать. Атте-анне килне вĕлтрен пусма парас марччĕ. Ял маллалах аталанса пытăрччĕ.

# Проект тĕллевĕсем

- Ял историйĕпе паллашасси.
- Ялпа çыхăннă халапсене пухасси.
- Ялти чи паллă йăх çинчен тĕпчесе пĕлесси.
- Чи кăсăклă хушаматсене тупса палăртасси.



# Урнар ялĕн историйĕ



**1693 çулта çырнисенчен:**
**«Свияжск уездĕнче Тутар Пăртас ялĕ сăртлă вырăнта вырнаçнă… ».**
**Çак Пăртас ялĕнчен икĕ ял тухнă: Шăплат тата Ыхра-Çырма (Ыхра -Шăплат).**

**Ыхра-Çырма ялĕнчен каярахпа тата икĕ яле Саруйпа Урнар тухнă.**



**Архив докуменчĕсем çинче Пăртас ялĕ пирки çакăн пек калани пур:**

**«1859 мĕш çул. Пăртас ялĕ, унтан татăлса тухнă вырăнсем: Ыхра-Çырма (Ыхра -Шăплат), Саруй, Урнар – Канар çăлĕ çывăхĕнче.**


Пăртас (Свияжски уездчĕ) «1652ç.»
Пăртас «1693ç.»
Ыхра Сырма «1710 с.»
Шăплат «1710ç.»
Саруй «1793ç.»
Урнар «1750ç.»





# Халап хапха та

Ёлёк – авал пурăннă тет, виçĕ питĕ пуян çын.
Вĕсен ячĕсем Пăртас, Шăплат тата Ыхра ятлă пулнă, тет.
Вĕсем патĕнче халăх тарçăра ĕçленĕ, пăхăнса пурăннă.
Пĕтĕм çĕр, выльăх-чĕрлĕх, пĕтĕм ĕç хатĕрĕ вĕсен аллинче пулнă, тет.
Çак пуянсенчен чи пуянни Пăртас пулнă, тет.



Шăплатпа Ыхра, Пăртас вĕсенчен пуянрах пулнишĕн питĕ кăмăлсăр пулнă, тет, ылханнă, тет.
Вĕсем Пăртаса хăваласа яма шут тытнă, тет, анчах Пăртас вăйлăрах пулнипе хăй хăваласа кăларнă, тет, вĕсене. Вара Шăплатпа Ыхран айлăмлăрах вырăнсене кайса вырнаçма тивнĕ ,тет.

- Ĕлĕк-авал çак ял вырнинче вăрмансем пулнă. Çак вăрмана пĕр çемье килсе вырнаçнă, имĕш. Упăшкине Ур тесе чĕннĕ, тет, арăмне – Нар. Вĕсен икĕ ывăл пулнă, тет. Пĕрне Илья, тепĕрне Шурча тесе чĕннĕ, тет. Вăрманта, чи илемлĕ вырăнта вĕсем йывăç пÿрт туса лартнă, тет. Çак вырăна ăмсанса çынсем куçса килме пуçланă, тет. Ял пысăклансах пынă, тет. Урпа ар ватăлса вилнĕ, тет, яла ят хурса хăварнă, тет. Ильяпа Шурча пĕр çырман икĕ пуçĕнче вырнаçнă, тет.





# Урнар ялёнчи чи паллă йăх

- Руссковсем
- Руссков Геннадий Васильевич ялта сумлă çын. Нумай хушă «Авангард» совхозра вăй хунă. Паянхи кун та ялти фермер патĕнче ĕçлет.
- Пăртасра вырăс çыннисем нумай пулнă. Геннадий сильевич шăпах çав вырăссенчен чăвашланнă çын.
- 1718-1720 –мĕш çулсенче рнар ялне Шăплатран Петĕр ятлă çын куçса килет. Вăл чăн-чăн вырăс пулнă-кăвак куçлă, сарă çўçлĕ, çутă питлĕ. Унăн ывăлĕ Трофим Вырăс Трофим ятпа çўрет Урнар ялĕнче. Çакăнтан вара Руссков хушамат пулса кайнă, тесе ăнлантарать Руссков Геннадий Васильевич.
-



- Петр
  - Трофим
    - Егор
      - Кузьма (4 ача )
      - Григорий
        - Михаил (3 ача )
        - Василий(6 ача )
          - Емельян (4 ача ), вăрçăра вилнĕ 4-шĕ те
            - Владимир (3 ача )
            - Емельян (1 ача )
            - Василий (3 ача )
              - Лиза
              - Геннадий
                - Вова
                  - Настя
                  - Алёша
                - Анатолий
                  - Саша
                  - Галина
                - Галина
              - Лидия
            - Александр (1 ача )
      - Христофор (2 ача )

# Кăсăк хушаматсем

- **Сандецкий** - çакăн пек хушаматлă поляксен адмиралĕ пулнă, тет. Урнар чăвашĕ Хусана кайса лекет, Сандецкий адмирал çинчен тĕлĕнмелле хыпарсем илтет, вара çак çынна питĕ кăмăлланипе унăн хушаматне илме шутлать. Паянхи кун та Урнар ялĕнче çак хушаматпа Сандецкая Антонина Николаевна çӳрет.
- **Ишутов** Урнар ялĕ Пăртас енчен куçса килнĕ çынсемпе пуян. Пăртас – вырăс сали. Ял çыннисем те, вырăсла калаçма вĕренес тесе ши пĕр-пĕринпе вырăсла перкелешнĕ. Ачасем çырмара шывра ишнине курнĕри: «Кур-ха, ишут», -тенĕ. Çавăнтан Ишут хушамат тухнă.
- **Надузьев** ашшĕ пулманнипе хĕр арăм ячĕпе (Натюç) панă хушамат. Ку хушаматпа Урнарта пĕртен пĕр çын Надузьев Георгий çӳрет.

- **Шишкин.** Урнар çынни Андрей Платонович граждан вăрçи вăхăтĕнче Шишкин хушаматлă командирăн адъютанчĕ пулнă. Командирăн ача тавраш пулман. Командирĕ вилес умĕн ыйтнипе Андрей Платонович Шишкин хушамата хăй çине çыртарать. Ку хушаматпа çўрекен ялта нумай çын.

- **Анишин.** Иван Сергеевичăн çурчĕ Энеш çырми хĕрринче пулнипе хушаматне те Анишин тесе илнĕ.



# Пĕтĕмлетӳ.

- Урнар ялĕнче юлашки тапхăрта пушă килсем йышланчĕç.
- Пурăнакансен йышĕ 5 çул хушшинче 12 çын чакрĕ.
- 20 çул вăтам шкул пулнă хыççăн 2008 çултан тăхăр çул вĕренмелли шкул çеç юлчĕ.
- Çамрăк çемьесем чăмартанасси палăрмаллах чакрĕ.
- Хуçалăх саланчĕ пулин те ялта вăтам çулхисем валли ĕç вырăнĕ пур (ферма ĕçлет).
- Акăнмасăр выртакан пушă çĕрсене сухаласа тыр-пул акса хăварнă.

# Тавтапуç!